# Поэт-куҫаруҫӑ

**Геннадий Федорович Юмарт (псевдоним, чӑн хушамачӗ Трофимов) —5.5.1938, Кайри Карӑк ялӗ) — поэт, куҫаруҫӑ, текстолог, фольклорист. СССР Писателӗсен Союзӗн членӗ (1985).**

Чӑваш патшалӑх педагогика институтӗнчен (1961) вӗренсе тухнӑ. Куйбышев облаҫӗнчи шкулсенче учительте (1961—65), Чӑваш кӗнеке издательствинче редакторта (1965—70) ӗҫленӗ. 1970—2000, 2003—09 Чӑваш АССР Министрсен Совечӗ ҫумӗнчи Чӗлхе, литература, истори тата экономика ӑслӑлӑхпа тӗпчев институчӗн (1994 ҫултанпа Чӑваш патшалӑх гуманитари ӑслӑлӑхӗсен институчӗ) ӑслӑлӑхӑн кӗҫӗн, аслӑ сотрудникӗ. 2001—06 Чӑваш патшалӑх университечӗн доценчӗ. Фольклора тата литературӑна тӗпчессипе 50 яхӑн ӑслӑлӑх ӗҫӗ пичетлесе кӑларнӑ. К. В. Ивановӑн, Г. А. Кореньковӑн, М. К. Ҫеҫпӗлӗн, И. Е. Тӑхтин, В. Е. Миттан тата ыттисен пултарулӑх пуянлӑхне тӗпченӗ, вӗсен ҫырнисен пуххисене пичетлемешкӗн хатӗрленӗ. Чӑваш фольклорӗн 6 томлӑ (1973—87), революцичченхи чӑваш литературин тексчӗсен 2 томлӑ (1984—2001) словарӗсене, чӑваш фольклорӗн чылай томӗсене (2004 ҫултанпа) пухса хатӗрлекенӗ тата редакторӗ. Сӑмах сыпӑкӗн ансатлӑхӗпе тата уҫӑ фольклор пуянлӑхӗпе уйрӑлса тӑракан "Тивӗҫ" (1969), "Кӗмӗл алтӑр" (1988), "Асаттесем" (2006) тата ытти кӗнекесен авторӗ.

Чӑваш АССР культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ (1988). К. В. Иванов ячӗллӗ Чӑваш АССР Патшалӑх премийӗн лауреачӗ (1988).